Раççей Президенчĕн Çырăвне тишкернĕ май

Çитес вăхăтри стратегиллĕ çул-йĕре палăртрĕ

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Дмитрий Медведев Федераллă Пухăва Çырупа тухрĕ. Тĕрĕссипе илсен, кунта пирĕн çĕршывăн çитес вăхăтри аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕсене палăртнă. Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте Раççее пур енлĕн çĕнетсе улăштарма пăхнă. Çавна та каласа хăварас пулать. Асăннă çырăва хатĕрленĕ май президентăн «Раççей, малалла!» статйи çине граждансем янă сĕнӳсемпе шухăшсене те шута илнĕ. Вĕсем вара пĕтĕмпе 18657 пулнă.

Паянхи калаçу – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕпе, районти тĕп больницăн тĕп врачĕпе Владислав Григорьевич ДАНИЛОВПА. Вăл президентăн Федераллă Пухăва янă Çырăвĕ пирки хăйĕн шухăшне пĕлтерме кăмăл турĕ.

– Çапла, президент хăйĕн çулленхи Çырăвне вуласа пачĕ. Нумай вăхăта тăсăлчĕ вăл. Çакă ăнсăртран мар тесе шутлатăп. Юлашки вăхăтра çĕршыв пурнăçĕнче тĕрлĕ ыйтусемпе проблемăсем сахал мар пухăннă. Çитменнине тата вĕсем тĕнчери экономика кризисĕпе те çыхăнман мар.

Пирĕн малаллах пăхас пулать. Унчченхи ятпа-сумпа кăна витĕнсе пурăнма пултараймастпăр. Малашлăх, аталану пирки шутламалла. Çавăн чухне кăна эпир малалла çирĕппĕн утăмлама пултаратпăр. Производствăра, хамăрăн пурнăçра та çĕнĕлĕхсемпе ытларах усă курас пулать. Кунта промышленноçри, ял хуçалăхĕнчи çĕнĕ технологисемпе çĕнĕ производство мелĕсем те, ытти çĕнĕлĕхсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Совет Союзĕн вăхăчĕ иртсе кайрĕ. Ун чухне вара Генеральнăй секретарь мĕн калать, çавăн пек пулса пымалла пулнă. Халĕ ĕнтĕ урăхларах пăхас пулать ку тĕлĕшри ыйтусем çине. Ыйтусене ытларах халăх хутшăннипе, халăхпа канашласа татса пама тивет. Пĕтĕм халăхăн кар тăрса ĕçлес пулать. Çĕнĕлĕхсене алла илмелле. Тĕнче прогресĕнчен юлма пултараймастпăр.

Президент хăйĕн Çырăвĕнче çавна палăртрĕ. «Çак 5 çул хушшинче çĕршывăн пĕтĕм территорийĕнче Интернетпа анлăн усă курма тытăнмалла. Супер-компьютерсен хăвачĕпе туллин усă курса çĕнĕ йышши оборудованисем, самолетсем, автомашинăсем, космос аппарачĕсемпе ятарлă реакторсем те ĕçе кĕртме май пултăр»,– терĕ. Çавăн чухне кăна эпир тĕнче шайĕнчен юлмăпăр.

– Пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ вăхăтĕнче пурăнатпăр. Пирĕн çĕршывра çак тапхăр уйăрмах йывăррăн иртнĕ пек туйăнать. Эсир Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулнă май ун пирки мĕн калама пултаратăр?

– Малтанах ĕнтĕ çапла ăнлантарчĕç: «Пирĕн укçа-тенкĕ тата ытти тĕлĕшпе запассем пур, кризис пире йывăррăнах пырса çапмĕ». Анчах та ăна президент та палăртрĕ, пирĕн экономика ытларах чĕр таварпа çыхăннă. Эпир ытларах газ, нефть сутатпăр. Чăнах та ĕнтĕ вĕсем хаклă чухне ытлашши пăшăрханма кирлĕ мар, укçа-тенкĕ çĕнĕ производствăсем хута ямасăрах туса илме пулать. Анчах та вĕçĕм капла пурăнма май çук. Конкурентлă продукци туса кăларассипе ытларах тимлеме тытăнас пулать. Ун чухне вара экономикăри йывăрлăхсем те пире ун пекех пырса çапмĕç.

– Хăйĕн Çырăвĕнче Дмитрий Медведев политика реформи çине те пысăк тимлĕх уйăрчĕ. Çавăн пирки мĕн шутлатăр эсир?

– Малаллахи пурнăç вăл эпир мĕнле килĕштерсе ĕçлеме пĕлнинчен килет. Кусем вĕсем саккун кăларакан влаç, ĕç тăвакан влаç, Президент администрацийĕ. Кун пирки президент та палăртрĕ. Уççăнлăх ытларах кирли пирки каларĕ. Эпир мĕнле ыйтусем сӳтсе явнине, мĕнле ыйтусем çине тимлĕх уйăрнине халăх пĕлсе тăтăр. Сӳтсе явакан ыйтусем вара сахал мар. Уйрăмах коррупципе кĕрешесси пирки асăнса хăвармалла. Ку енĕпе татса памалли ыйтусем пур-ха. Çавăнпах ĕнтĕ президент ку ыйтусем çинче чылай чарăнса тăчĕ.

– Халăх ытларах хăйне тӳрремĕн пырса тивекен ыйтусене пысăк тимлĕх уйăрать. Асăннă Çырупа паллашнă май вара халăхăн социаллă пурнăç шайĕ палăрмаллах ӳсмелле теме пулать.

– Пирĕн республика ытларах – ял хуçалăх республики. Президент малашне те ял хуçалăхĕ çине пысăк тимлĕх уйăрма шантарчĕ. Медицина пирки калас пулсан вара «Сывлăх» наци проектне аталантарса пырасса пĕлтерчĕ. Унăн енĕсем те хушăнса пырĕç. Вĕсем валли укçа-тенкĕне те ытларах уйăрĕç.

Хальхи вăхăтра эмелсен ытларах пайне чикĕ леш енчен кӳрсе килетпĕр. Президент вара 5 çул хушшинче хамăр çĕршывра туса кăларакан эмелсемпе усă курассине 25 процента çитерме кирлине палăртрĕ. 2010 çул тĕлне вара ку хисеп 50 процента çитмелле.

Сывă пурнăç йĕркине çирĕплетсе пырассине пысăк вырăн уйăрчĕ президент. Ку вăл хальхи вăхăтшăн чăннипех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çыннăн сывлăхĕ 50 процент унăн пурнăç условийĕсенчен килет. Çакна ачаранах хăнăхтарас пулать. Ăнлантару ĕçне те анлăн туса пымалла.

Вĕрентӳ енĕпе илсен, «Пирĕн çĕнĕ шкул» программа пирки асăнмалла. Президент шухăшĕпе шкултах ачасен пултарулăх енĕсене палăртмалла, вĕсене малашне аталантарса пыма майсем туса памалла. Уйрăмах аслă классенче вĕренекенсемпе тачă çыхăнса ĕçлемелле. Кунсăр пуçне физкультурăна аталантарасси пирки манма юрамасть.

– Çак малашлăх планĕсем çĕршывра тăнăçлăх, мирлĕ пурнăç пулсан кăна пурнăçа кĕме пултараççĕ. Владислав Григорьевич, Çырури йĕркесемпе паллашнă май çĕршыв хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсем пирки мĕн калама пултаратăр?

– Пирĕн çĕршывăн пуянлăхĕ сахал мар. Вĕсене хапсăнакансем те çук мар. Çавăнпа та пирĕн вĕсене сыхласа хăварма яланах хатĕр пулни кирлĕ. Ку вăл çар, çар техники, идеологи енĕпе те. Çар çыннисен пурнăç условийĕсене те лайăхлатса пымалла.

Вăрçă ветеранĕсем, хыççăнхи çулсенче çĕршыв хуçалăхне çĕкленĕ çынсем пирки те манмалла маррине палăртрĕ президент. Вĕсен социаллă ыйтăвĕсене тивĕçлĕ шайра татса парас пулать. Эпир вăйлă та çирĕп патшалăх пулмаллах тесе палăртрĕ президент. Унччен кун пек мар йывăрлăхсене çĕнтерме пултарнă пулсан, хальхи йывăрлăхсене çĕнтерме те вăй çитеретпĕрех.

«Раççей, малалла!»,– тесе пĕтерчĕ Дмитрий Медведев хăйĕн сăмахне.

– Владислав Григорьевич, пĕтĕмĕшле мĕн калама пултаратăр президентăн кăçалхи Çырăвĕ пирки?

– Çак Çыру, тĕрĕссипе каласан, мана питĕ килĕшрĕ. Эпĕ ĕнтĕ пĕрремĕш çул мар республика политика шайĕнче тăратăп. 11 çул ЧР Аслă Канашĕн депутачĕ. Çавна май Çырупа уйрăмах тĕплĕ паллашрăм. Пирĕн пурин те унта палăртнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлес пулать. Унăн тĕп шухăшĕсене халăх патне çитерессипе вăй хуни кирлĕ. Пĕрле кар тăрса ĕçлесен кăна хамăрăн пурнăçа ырă еннелле улăштарассипе палăрăмлă çитĕнӳсем тума май килĕ. Çавна палăртрĕ те хăйĕн Çырăвĕнче президент.

– Татах тепĕр ыйту. Виçĕм кун хамăр республика Президенчĕ Николай Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырăвне вуласа пачĕ. Вăл сирĕншĕн мĕнле шухăшсем çуратать?

– Ку вăл – халăхăмăр умĕнче хамăр тунă ĕç-хĕлĕн çулталăкри пĕтĕмлетĕвĕ те, малашлăха пăхни те. Çак Çыру вăл республика умĕнчи паянхи ыйтусене пĕрле татса пама май паракан пулăм пулса тăрать. Асăннă Çыру пирки – уйрăм калаçу.

Пенси ыйтăвĕсем: çĕнĕлĕхпе паллаштаратпăр

Инвалидсен пенсийĕ мĕнрен килĕ?

Çитес çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен тытăнса инвалидсене пенсие çĕнĕ йĕркепе шутласа параççĕ. Хальхи пек ĕçлеме пултараслăха çухатнин степеньне кура мар, инвалидлăх ушкăнне тĕпе хурса. Çапла туни инвалидлăх ушкăнĕ ĕçлеме пултараслăха çухатнин степенĕнчен пысăкрах сусăрсен тӳлевне ӳстерме тата степень çуккисене пенсие кăларма май парать.

Вĕсен пенсийĕн тата уйăхри укçа тӳлевĕн виçине çĕнĕ çултан хушма тĕрĕслев иртермесĕрех шутлаççĕ.

Федерацин 2009 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 213-мĕш саккунĕпе килĕшӳллĕн «ĕçлеме пултараслăха çухатнин степеньне» пăрахăçласа «инвалидлăх ушкăнĕ» патне çĕнĕрен таврăнаççĕ.

Тĕрĕссипе юлашки ăнлавĕ 2004 çулччен вăйра тăнă-ха. Медицинăпа социаллă экспертиза служби каярахпа унăн ушкăнне кăна мар, ĕçлеме пултараслăха çухатнин степеньне те палăртма тытăннă. Степень çук пулсан – çын тĕп ĕçе пурнăçлать, 1-мĕш степень пурри хăйĕн профессийĕпе вăй хума пултарать, анчах çур ставка чухлĕ кăна, 2-мĕш степеньлин ятарлă условипе тивĕçтернĕ вырăнта кăна вăй хумалла, 3-мĕш степеньли нимĕнле ĕç те пурнăçлаймасть. Çакнашкал тытăм чылайăшне тивĕçтермен: хăш-пĕр чух ĕçлеме пултараслăха çухатнин степеньне инвалидлăх ушкăнĕнчен те пĕчĕкрех палăртнă. Çакă вара тӳлев виçине витĕм кӳнĕ. Çитес çултан инвалидлăх ушкăнне тĕпе хурса пенсисене дифференцилеме тытăнаççĕ. Çĕнĕлĕх 2010 çулччен инвалид тесе йышăннисене те пырса тивет. Вĕсен ушкăнĕсене çапларах палăртаççĕ:

Пĕрремĕш ушкăн инваличĕсем: 1-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин степеньне пăхмасăр; 1-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин степенĕ çуккисем; 2-мĕш тата 3-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин 3-мĕш степенĕ пуррисем.

Иккĕмĕш ушкăн инваличĕсем: 2-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин 2-мĕш тата 1-мĕш степенĕ пуррисем; 2-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин степенĕ çуккисем; 3-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин 2-мĕш степень пуррисем.

Виççĕмĕш ушкăн инваличĕсем: 3-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин 3-мĕш степенĕ пуррисем; 3-мĕш ушкăн инваличĕсем, ĕçлеме пултараслăха çухатнин степенĕ çуккисем.

Сусăрăннине пула ĕç пенсийĕ илекенсене тивĕçлĕ канăва тухмалли ӳсĕм çитсен 2010 çултан (хĕрарăмсен – 55, арçынсен – 60 çулта) ĕç стажĕ 5 çул е унран ытларах пулсан, заявлени çыртармасăрах ватлăхри ĕç пенсийĕ çине куçараççĕ. Стаж пĕчĕкрех пулсан ĕç пенсине малалла тӳлеççĕ. Каярахпа социаллă пенси пама йышăнаççĕ: хĕрарăмсене – 60, арçынсене – 65 çулта. Кун пек чух та заявлени çыртармаççĕ. Ватлăхри ĕç пенсийĕпе социаллă пенси виçи инвалид пулнипе илсе тăнинчен пĕчĕк пулмасть. Инвалидлăхпа çыхăннă çăмăллăхсемпе тӳлевсем сыхланса юлаççĕ. Пенси тĕсĕ тата виçи улшăнсан Пенси фончĕ çакăн пирки çырупа пĕлтерет.

3-мĕш ушкăн инваличĕсене – ĕçлеме пултараслăха çухатнин степенĕ çуккисене – инвалидлăхпа паракан ĕç пенсине кăларма пултараççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем уйăхри укçа тӳлевне кăна илеççĕ. Асăннă ушкăна кĕрекенсен пенсие тивĕçме Пенси фондне стаж тата ĕç укçи пирки документсене çитермелле.

Çар çыннисене, Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисене тата блокадăри Ленинградра пурăннă çынсене – 3-мĕш ушкăн инваличĕсене патшалăх пенсийĕпе тивĕçтерес енĕпе улшăнусем пулаççĕ: тӳлев виçи, 1-мĕш тата 2-мĕш ушкăнсенчи инвалидсенни пекех, вĕсен шучĕпе миçе çын пурăннинчен килет.

Пенси валли пухăннă укçа пур инвалидсене, куç курман сусăрсене ватлăхри ĕç пенсине маларах кăларнă чух пухăнса пыракан пай çирĕплетсе параççĕ. Енчен те тивĕçлĕ канăва тухмалли ӳсĕм çитнĕ тапхăр тĕлне ĕç пенсийĕн ирĕкĕ пулмасан, пухăннă укçана пĕр харăс тӳлеççĕ. Ĕçлеме пултараслăха çухатнин 3-мĕш тата 2-мĕш степенĕпе ĕç пенсийĕ илсе тăракансене – ачаранпах инвалид шутланакансене пенсин пухăнса пыракан пайне миçе çултине пăхмасăр 2010 çултан çирĕплетеççĕ.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.

Валоризаци вăл – ĕç пенсине ӳстерни

Район хаçатне вулакансенчен килекен ыйтусем хушшинче валоризаципе çыхăннисем те çук мар. Вĕсем пирки тĕплĕнрех РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхне Елена Михайловна АЛЕКСАНДРОВАНА тепĕр хут каласа пама ыйтрăмăр.

– Мĕн-ха вăл валоризаци?

– Валоризаци вăл – сирĕн ĕç пенсийĕн шайне ӳстерни. Пенсисен виçине 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ӳстереççĕ.

– Валоризацин тытăмĕ мĕнре-ха?

– Раççейре пурăнакан 2002 çулччен ĕç стажĕ пур граждансен пенси прависене укçа-тенкĕ тĕлĕшпе çĕнĕрен шутласа параççĕ.

Сирĕн 2002 çулччен йĕркеленнĕ расчетлă пенси капиталне 10 процент индексацилеççĕ. Пенси капиталĕ вăл – ăна шута илсе аслă ăрури пенсионерсен ĕç пенсийĕн страхланă пайне палăртакан 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлнехи расчет виçи. Кунсăр пуçне 1991 çулчченхи ĕç стажĕшĕн кашни çулшăн 1-шер процент хушса параççĕ.

– Валоризаци камсене пырса тивет?

– 2002 çулччен ĕç стажĕ пур пулсан, Раççейре пурăнакан кашни çыннах: хальхи пенсионерсене те, вăл шутра ĕçлекеннисене тата çамрăк çынсене те.

– Пенси çумне мĕн чухлĕ укçа хушăнать-ха?

– Кашни гражданинăнах пенси прависем ӳсесси пĕр пек пулмасть. Ку вăл 2002 çулчченхи ĕç стажĕнчен килет. Вăтамран илсен валоризаци пурнăçа кĕнĕ май ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн виçи 700 тенкĕрен тытăнса 1300 тенкĕ таран ӳсет.

Енчен те çыннăн «совет» тапхăрĕнчи стаж чылай пулсан, пенси 1700 тенкĕ таран та ӳсме пултарать.

Çулталăк хушшинче пенси виçисене планпа пăхнă пек индексациленĕ чухне валоризаципе хăпарнă пенси виçисене тĕпе илеççĕ.

– Çыннăн хăйĕн пенсине валоризацилеме мĕн тумалла?

– Нимĕн те тума кирлĕ мар. Валоризаци хăй тĕллĕнех пулса иртет. Пенси фончĕ сирĕн пенси ĕçĕн докуменчĕсене тĕпе хурса пенси виçине çĕнĕрен шутласа палăртать. Ĕç укçи виçи тата стаж пирки унччен шута илмен документсем пур пулсан е пенси виçине урăх вариантпа шутласа палăртас тетĕр пулсан кăна сирĕн Пенси фондне пымалла пулать.

Тав сăмахĕ

Пире чун ăшши парнелеççĕ

Эпир, Мăн Сĕнтĕрти инвалидсемпе ватă çынсен вăхăтлăх пурăнмалли çуртĕнче пурăнакансем, кунта вăй хуракан социаллă ĕçченсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

Уйрăм ертӳçи Людмила Геннадьевна Каргина ертсе пынипе социаллă ĕçченсем Елена Назаровна Грачева, Алефтина Иосифовна Салтыкова, Елена Егоровна Терентьева тата Зоя Владимировна Васильева тĕрлĕрен мероприятисем ирттерсе пире савăнтараççĕ. Вĕсем çак çурта тирпей-илем кĕртсе тăраççĕ, пире тутлă апат-çимĕç пĕçерсе çитереççĕ.

Çакăнта пурăнакансем эпир пурте вĕсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Сирĕн çемйĕрсенче яланах килĕшӳпе çураçу хуçаланччăр.

Ваттисен çуртĕнче пурăнакансем.

Сире пĕлме

Ирхине мĕн тумалла?

Ирхине. Вăрантăн. Мĕн калать-ха ватă çын ун пирки? Мĕн тумалла ирхине? Çак ваттисен сăмахĕсенче япăххи çук. Апла вĕсен ăсĕпе пурăнмалла, усă курмалла.

Ир тăракан çерçи тулă пĕрчи, кайран тăни хывăх тупнă.

Ире хирĕç ырри.

Ир тăр та питна çу, питна çу та çăкăр тыт.

Ир тăрана Тур парать.

Ирхине çӳрекен ыр хыпарпа, çĕрле çӳрекен – çĕрĕк хыпарпа.

Кахалсем пирки вара пирĕн ватă асаттесем çапла каланă:

Ирпе мухмăрла, кăнтăрла сулхăнра.

Ирпе мухмăр чĕртет, кăнтăрла ыйхă чăпти çĕклет.